24-меш çул тухать. Хаке 15 пус.

1941
ОКТЯБРЬ
24
ӐРНЕКУН
251 (5966) №

# ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

## *Коммунистсемпе комсомолецсем, боецсен пĕрремĕш ретне тăрăр!*

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç совет халăхĕ хастарăн та паттăрăн отечественнăй вăрçă туса пырать. Вăрçа халăхăн çавтери анлă массисем хутшăннă. Хăрлĕ Çаран регулярнăй чаçĕсемпе юнашар тăрса тăшмана хирĕç халăх ополченийĕн дивизийĕсем, полкĕсемпе батальонĕсем çапăçаççĕ. Çак вăрçă вăл чăннипех те халăх вăрçи пулса тăрать.

Совет халăхĕн пуçĕнче большевиксен коммунистла партийĕ тăрать. Большевиксен партийĕ—Совет Союзĕнчи халăхсен организаторĕпе çулпуçĕ, халăхсен пуç мимийĕпе чĕри.

Пирĕн партин вăйĕ вăл халăхпа тачăн çыхăнса тăнинче, тесе вĕрентет Сталин юлташ. Яланах халăхпа пĕрле, яланах массăсен пуçĕнче—çапла большевиксен партин законĕ. Пирĕн халăх большевиксен партине хăйĕн тăван та çывăх организацийĕ тесе шутлать, унăçăн совет халăхĕн пурнăçĕ те, ĕçĕ те тытăнса тăма пултараймасть.

Большевиксен партийĕ уйрăм йышши çынсенчен, уйрăм сăн-сăпатлă çынсенчен тăрать. Коммунистсен партин членĕсем—вĕсем хăйсен пурнăçĕсене пĕтĕмĕшпех те вĕçне çитичченех рабочи класс ĕçне, халăх ĕçне панă çынсем. Коммунистсем—вĕсем хăйсене яланах тата пур çĕрте те тӳрĕ кăмăллăн, çирĕплĕн те хастарăн тытса, ыттисене пример кăтартма тивĕçлĕ тесе шутлакан çынсем, халăх интересĕсене хӳтĕлесси çинчен сăмах пынă чухне хăйсене яланах чи хăрушă вырăнсенче пулма тивĕçлĕ тесе шутлакан çынсем пулса тăраççĕ.

Сталин юлташ В. И. Ленин вилнĕ пирки 1924 çулти январь уйăхĕнче халанă сăмахра коммунистсем çинчен çапла каланă: **«Эпир, коммунистсем, — уйрăм йышши çынсем, эпир уйрăм йышши материалран тунăскерсем. Эпир—аслă пролетариллĕ стратегăн çарĕ, Ленин юлташăн çарĕ пулса тăратпăр. Çав çарта тăрассинчен хисепли урăх нимĕн те çук. Ленин туса, ертсе тăнă партин членĕ ятĕнчен çӳлли урăх нимĕн те çук. Çакăн пек партин членĕ пулма пули-пулми çынна пӳрмен. Çакăн пек партире тăнипе сыхăнса тăракан инкексемпе тăвăлсене чăтма пули-пулмине тӳсĕм паман. Рабочи класăн ывăлĕсем, нушапа нĕрешӳ ывăлĕсем, калама çук хурлăхлă пурнăçпа паттăр ӗçсен ывăлĕсем,—акă камсем пулмалла, пуринчен малтан, çакăн пек партин членĕсем».**

Пытанса вăрттăн ĕçленĕ çулсенче большевиксен калама çук йывăр асапсемпе хĕнхурсем тӳссе иртерме лекнĕ. Граждан вăрçин çулĕсенче большевиксем вырăс капиталисчĕсемпе помещикĕсене хирĕç тата ютçĕрпшув интервенчĕсене хирĕç кĕрешекен паттăрсен пĕрремĕш речĕсенче пынă. Граждан вăрçи хыççăн большевиксем хуçалăх строительстви енĕпе хĕрӳллĕ ĕç пуçарса ярса, социализмлă обществăна туса çитерессине тĕпрен илсен пурнăçа кĕртрĕç. Çак историллĕ мĕнпур аслă ĕçсенче коммунистсем яланах малти ретре пулнă. Нимĕнле йывăрлăхсем те, нимĕнле тертлĕхсем те большевиксен партин çирĕплĕхне хавшатайман, хăй палăртнă тĕллеврен ăна каялла пĕр утăм та чакарма пултарайман.

Пирĕн халăх пурнăçĕшĕн татах йывăр вăхăтсем килсе çитрĕç. Пирĕн çĕршыв çине вăйлă та улттавлă тăшман килсе тапăнчĕ. Гитлерла йыткĕтĕвĕсем Совет Союз территорийĕн сахал мар пайне тытса илчĕç. Вĕсем Ленинграда, Донбаса, Мускава хăратса тăраççĕ. Пирĕн халăха тӳссе иртерме лекнĕ çак йывăр испытанире те нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç кĕрешекен паттăрсен пĕрремĕш речĕсенче—коммунистсем тата коммунистсене çамрăк йыш парса тăракан комсомолецсем пыраççĕ.

Гитлерпа унăн тискер йыткĕтĕвĕсене хирĕç совет халăхĕ туса пыракан вăрçă паттăрлăх, хастарлăх, геройлăх енĕпе тĕрĕслемелли тата совет çĕршывĕн интересĕсене парăннине тĕрĕслемелли испытани пулса тăрать. Вăрçă вут-çулăмĕнче миллионшар çынсем тĕрĕслӳ витĕр тухаççĕ. Совет çыннисем совет çĕршывне, совет стройне чĕререн парăнса юратнине хăйсен юнĕпе, хăйсен пурнăçĕпе кăтартса параççĕ. Кашни коммунист, кашни комсомолец кăтартуллă совет воинĕ пулса тăма тивĕçлĕ, куллен чăн-чăн халăх геройлăхĕн примерĕсене кăтартса пыма тивĕçлĕ. Заводра, колхозра коммунистпа комсомолецăн малта пыракан стахановецсем пулмалла, ĕçри çирĕп дисциплинăшăн, организованноçшăн, революциллĕ йĕркелĕхе çирĕплетессишĕн тата сыхăлăха ӳстересшĕн кĕрешмелле. Фронтра та, тылра та коммунистсемпе комсомолецсен нимрен хăраман, чи хăюллă та чи паттăр боецсем пулмалла.

Вăрçăра коммунистсем те, партире тăманнисем те пысăк тĕрĕслӳ витĕр тухаççĕ. Шкурниксем, парти ретне ултавлăн шăвăнса кĕнĕ элементсем кăна çакăн пек саманта йывăç тĕми хыçне пытанма, халсăра персе ларма пултараççĕ. Çавăн пек çынсене партирен тата комсомолран пĕр хĕрхенмесĕр хăвала-хăвала кăлармалла. Çавăн пек çынсене валли хăюллисем хушшинче, тӳрĕ кăмăллă та паттăр патриотсем хушшинче выран çук.

Яланхи пекех, совет халăхĕн пурнăçĕпе кĕрешĕвĕн йывăр çулĕсенче партипе комсомола пиншар те пиншер çĕнĕ çынсем кĕреççĕ. Çав çынсенчен нумайĕшĕсем фронтри тĕрĕслӳ витĕр тухнă, хаяр çапăçусенче пулнă, хăйсен паттăр ĕçĕсемпе большевиксен партине чĕререн парăнса юратнине кăтартса панă.

Действующи Хĕрлĕ Çарти парти тата комсомол организацийĕсене боецсемпе командирсенчен парти ретне тата комсомол ретне кĕме ĕмĕтленни çинчен калакан заявленисем кунсерен питех те нумайăн пырса тăраççĕ. Апсалямов боец парти ретне илме ыйтакан хăйĕн заявленийĕнче çапла çырать: «Эпĕ коммунист пулма ĕмĕтленетĕп, Ленин—Сталин партийĕшĕн çапăçу вут-çулăмĕнче юлашки юн тумламĕ юлмичченех, хамăн пурнăçа хĕрхенмесĕр кĕрешме тупа тăватăп» тет. Летчик-орденоносец комсомолец Лукьянов хăйĕн заявленийĕнче çапла çырать: «Большевиксен мухтавлă партийĕн ретне кĕресси—манăн ĕмĕт. Коммунистăн аслă ятне илме пули-пулми çынна право паман. Эпĕ, рядовой летчик пулса тăрса, хам парти ретне кĕме тивĕçлĕ пулассине тăшмана хирĕç çапăçса кăтартса парас вăхăт çитессине чĕререн кĕтсе тăнă, эпĕ çавна кăтартса патăм та». Çакăн пек заявленисем вĕсем çĕршерĕн те пиншерĕн шутланаççĕ.

Тăван çĕршыв умне хаяр хăрушлăх тухса тăнă кунсенче большевиксен партине малта пыракан рабочисем, колхозниксем, интеллигентсем—Хĕрлĕ Çаран тылне хăйсен геройла ĕçĕсемпе ывăнма пĕлмесĕр тĕреклетсе пыракан çынсем хĕреççĕ.

Çаксем хушшинче нумайĕшĕсем фронтра вĕсем коммунистсен партийĕпе халăх массисем хушшинчи çыхăну вăйланса пынине кăтартса параççĕ. Тăван çĕршыв умне хаяр хăрушлăх тухса тăнă кунсенче совет халăхĕ хăйĕн тăван большевикла партийĕ тавра татах та таччăнрах пĕтĕçсе тăрать. Совет халăхĕн моралльĕ-политикаллă пĕрлĕхĕ ӳссе тĕрекленсе пырать. Çав пĕрлĕхре, çав пĕтĕçӳре — эпир тискер те ирсĕр тăшмана çĕнтерес шанчăк.

Ленинăн—Сталинăн çапăçури мухтавлă ялавне татах та çӳлерех çĕкле, хамăран ретсене большевиксен партийĕ тавра, юратнă çулпуç тата полководец Сталин юлташ тавра татах та таччăнрах пĕтĕçтерер, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене пуçĕпех çапса аркатмалла отпор парар, çав ирсĕр йыткĕтĕвĕсене пуçĕпех ӳпĕнтерсе хурар, хамăран çĕнтерĕва алла илер!

Коммунистсемпе комсомолецсем, çак хĕрешӳре массăсене ертсе пыракансем пулăр, паттăрлăхпа хастарлăхăн, çирĕплĕхпе чăтăмлăхăн примерĕсене кăтартса паракансем пулăр!

**(«ПРАВДА» умстатьи, октябрĕн 22-мĕш).**

## Совет Информаци Бюровĕнчен

### Октябрĕн 22-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 22-мĕшĕнче пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра çапăçусем туса пынă. Нумай кунсем хушши пынă вăйлă çапăçусем хыççăн (çав çапăçусем вăхăтĕнче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 35 пин çынна яхăн вилнĕ тата аманнă) пирĕн войскăсем Таганрог хулинчен тухса кайнă.

Октябрĕн 21-мĕшĕнче нимĕçсен 34 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 8 самолет пĕтнĕ.

Октябрĕн 21-мĕшĕнче Мускав патĕнче противникăн 17 самолетне тата октябрĕн 22-мĕшĕнче 14 самолетне персе антарнă.

• • •

Хĕвеланăç фронтĕнче çапăçакан пирĕн авиачăсем юлашки кунсенче противникăн аэродромĕсем çине темиçе хутчен те вăйлăн пыра-пыра тапăннă. Октябрĕн 11—18-мĕшсем хушшинче кăна, туллимар даннăйсем тăрăх, противникăн аэродромĕсенче нимĕçсен 500 самолетне яхăн пĕтерсе тăкнă.

• • •

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн пĕр авиачасть октябрĕн 21-мĕшĕнче нимĕçсен 80 танкне, пехота тата грузсем турттарса пыракан 180 автомашинине тата тăшман пехотине икĕ батальон пĕтерсе тăкнă.

• • •

Тытăна илнĕ нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем хăйсене допрос тунă чухне каласа панисем тата сырăвăсемпе дневникĕсем салтаксем хушшинче йывăр шухăш-кăмăлсем ӳссе сарăлса пыни çинчен каласçĕ. Аяларах эпир нимĕçсен 75-мĕш артполкĕнчи тытăна илнĕ ефрейторăн Гирхард Цитронăн дневникĕнчи уйрăм сыпăксене илсе кăтартатпăр: «Вырăс самолечĕсем сывлăшран бомбăсем пăрахнинчен тăнз кĕрсе çитме те май çук, татти-сыпписĕр пытанса тăма тивет. Эпир пурте йытăсем пекех ывăнса çитрĕмĕр, çĕрле те пулин çывăрса илме çук. Вырăссем тĕлĕнмелле хытă хирĕç тăраççĕ. Чăнчăн фронт çукпа пĕрех. Пур енчен те переççĕ. Тăшмансем çинчен пĕр самант та куç илмелли çук, тамăкри пекех, асăрхасах тăрас пулать». Тата темиçе эрне иртет. Нимĕçсен фашистла войскисем питĕ пысăк çухатусем тӳсеççĕ. Гитлеровецсен, Цитрон калашă тăрăх, салтаксен вăрçас чун-хавалне çĕклес тесе, ирĕксĕрех темĕн те пĕр шухăшласа кăларма тивет. «Ĕнер каçхине пире валли уйхиртех турă хĕлли туса иртторчĕç,—тесе çырать Цитрон августăн 7-мĕшĕнче тата полкри пастор хăйĕн проповеденче мĕн калаянине кĕскен çырса хурать. Пастор «салтаксене çак йывăр çулпа пыма турă хăй хушнă, çавăнпа та вĕсем, кирлĕ пулсан, йывăр вĕçленĕве йышăнса илме те хатĕр пулмалла», тесе ĕнентересшĕн. Çумăрлă сивĕ кĕркунне килсе çитет. Сентябрĕн 29-мĕшĕнче Цитрон хăйĕн дневникне çапла çырса хурать: «Тӳсме çук усал çанталăк, эпир кĕсенлĕ анчăк сӳрисем пекех шăнатпăр. Хĕл çитсе тăрсан мĕн пулĕ капла?»

• • •

Чита облаçĕнчи машинно-тракторнăй станцисем пысăк çĕкленӳпе ĕçлеççĕ. Вĕсенчен 13-шĕ трактор ĕçĕсен çулталăк планне тултарнă та ĕнтĕ. Агински, Могойтуйски МТС-сем çулталăк заданине пĕрре те çурă хут тултарнă. Агинскри МТС-ра, вăтамăн шутласан, кашни трактор 500 гектар ытла ĕçленĕ, малта пыракан Сандон Жалтанов бригадинче вăтам шутпа кашни трактор пуçне 700 гектар таран ĕçленĕ. Потихински МТС 500 гектар çинчо тайга вăрманне касса тасатнă, тункатисене кăкланă, шурлăхсене типĕтнĕ, 600 гектар çинче çерем çĕтнĕ. МТС-ра ĕçлекенсен пысăк мар коллективĕ унччен этем кĕрсе тухма пултарайман чăтлăх тайгари 1.500 гектар çинче тырпул акса тумалли паха хир туса хунă. МТС-сенче пуринче те хĕрарăмсен трактористăй бригадисем хăйсене хăйсем шеллемесĕр ĕçлеççĕ. Петровски МТС-ри Степанида Полохова бригади тырпул пухса кĕртес тата кĕрхи çĕртме тăвас тĕлĕшпе чи мала тухнă. Çак бригадăри трактористкăсем: Васса Трофимова, Вера Цедурина тата Ефросинья Саменова кунсерен иккĕр норма тултарса пынă. Малта пыракан МТС-ем горючи нумай перекетленĕ: Кабухаевски МТС хăй кăна 20 тонна, Агински МТС 17 тонна перекетленĕ тата ытти те.

### Октябрĕн 23-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 23-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра çапăçусем туса пынă.

* * *

Пирĕн пĕр авиачасть бомбăсем пăрахса тата штурмласа октябрĕн 14—18-мĕшсенче противникăн 108 танкне, пехотăпа боеприпассем турттарса пыракан 189 автомашинине, бензин тултарнă 6 цистернине, 150 яхăн мотоциклне, темиçе орудине тата зенитнăй артиллерин икĕ батарейине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Фронтăн Кăнтăр-Хĕвеланăç енче çапăçакан Комаров, Равнин тата Зайцев юлташсен подразделенийĕсенчи летчиксем 20 кун хушши пынă çапăçусенче фашистсен 56 самолетне, 150 ытла танкне, 700 ытла автомашинине, 54 танкеткине, 15 бронемашинине, 33 орудине, зенитнăй пулеметсен 16 установкине, противникăн пехотине икĕ батальон ытла тата утлă çарĕн 6 взводне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче çапăçакан пирĕн пĕр часть противникăн 85 мотоциклне, 12 автомашинине, вăл шутран штабри документсем тиенĕ икĕ машинăна, 400 велосипедне, противотанковăй 6 орудине, 10 пулеметне, 5 минометне тата винтовкăсем, боеприпассем, тумтирсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Связистсем çапăçусенче пысăк паттăрлăх кăтартаççĕ. Тăшманăн самолечĕсем пулеметсенчен пенине пăхмасăрах, кĕçĕн сержантăн Солдатов юлташăн подразделенийĕ авиабомбăсемпе çĕмĕрнĕ телефон çыхăнăвне çĕнĕрен йĕркелесе янă. Связистсем Солдатовпе Якимчук, хăйсем аманнă пулсан та, çыхăнăва йĕркелесе яма илнĕ боевой задание пурнăçа кĕртсе çитеричченех ĕçленĕ.

* * *

Германие хирĕçле выступленисем тунăшăн асаплантарса вĕлермелле тунă приговорсем çинчен Германин Франции оккупацийллĕ влаçĕсем кашни кунах пĕлтереççĕ. Юлашки виçĕ кун хушшинче 84 француза асапланатарса вĕлернĕ. Октябрĕн 18-мĕшĕнче пулса иртнĕ суд ларăвĕнче Сен-Денири Жиро ятлă çамрăк учителĕн ĕçне итленĕ, ăна «ученисене Германие хирĕçле выступленисем тума хĕтĕртнĕ» тесе айăплана. Ăна асапланатарса вĕлермелле тунă приговора вуланă хыççăн, Жиро: «Эпир французсен чунĕсене хăратасшăн, анчах та ун вырăнне харсăлататăр кăна. Ылханлăскерсем, сирĕн пурнăç часах пĕтет акă!»—тесе кăшкăрнă. Жирон çак сăмахĕсене антифашистсем листовкăсем çине çырса сарнă тата çуртсен стенисем çумне çыпăçтарса тухнă.

Нантре нимĕçсен генералне Гольца вĕлерни оккупантсене ăраснах уртарса янă. Гольца вĕлернĕшĕн репресси тусе Германин Парижри влаçĕсем 50 француза асапланатарса вĕлерме хушнă. Генерала вĕлерекен çынсене октябрĕн 23-мĕш тĕлне тупса памасан, оккупацийллĕ влассем татах 50 заложнике асапланатарса вĕлерме хушаççĕ, тесе хăратаççĕ нимĕçсем.

* * *

Отечественнăй вăрçă кунĕсенче Азербайджанри совет ученăйĕсем халиччен пулман пысăк çĕкленӳпе ĕçлеççĕ. Мамедалиев юлташ ертсе пынипе ĕçлекен научнăй сотрудниксен коллективĕ лабораторийлĕ условисенче пысăк пахалăхлă топливăна тупмалли май шухăшласа кăларнă. Халĕ çав майпа производствăра усă курма хатĕрленеççĕ. Старший инженерăн Масумян юлташăн лабораторийĕ талăкĕпех ĕçлет, вăл çĕнĕ горизонтсенчи нефть пахалăхне тĕпчесе пĕлет.

Вăтам Азири кăмăксенчен кокс тупас проблема тĕлĕшпе СССР Наукăсен Академийĕн Узбекри филиалĕн хими институчĕ ăнăçлăн ĕçлет. Лаборатори Узбекистанри кăмăкран чи малтанхи хут кокс тупнă та ĕнтĕ. Халĕ çав опыта республикăри заводсенчен пĕринче пысăк масштабпа организацилеççĕ. Çавăнпа пĕрлех тата Вăтам Азири ытти çĕрти кăмăксемпе кокс вырăнче усă курас ĕçе тĕпчесе вĕренеççĕ. Узбекистанри çунакан сланецсенчен искусственнăй майпа шĕвĕ топливо тупас тĕлĕшпе иртерекен опытсем пурнăçра питĕ кирлĕ пулма пултараççĕ.

## Шупашкар хулинчи ĕççыннисем Мускав хулине геройла хӳтлекенсем патне янă çыру

*Юлташсем, тăвансем, туссем—çывăх москвичсем!*

Çак хăрушă, историллĕ кунсенче Сире, хамăран столицăна геройла хӳтлекенсене, чĕнсе калатпăр эпир—Шупашкар хулинчи ĕççыннисем.

Германи фашизмĕн тискер йыткĕтĕвĕсем пирĕн тăван çĕршывăн чĕри патне—Мускав патне татса кĕме хăтланаççĕ. Хаяр тăшман, çынсемпе хĕçпăшалсем енĕпе пысăк çухатусем тӳснине пăхмасăр, Мускав патĕнчи вырăнсенче урса кайсах çапăçать, вăл пирĕн тăван столицăн урамĕсене юнпа çăвасшăн, унăн историллĕ хаклă памятникĕсене çĕмĕрсе тăкасшăн, пирĕн советлă социализмлă культура центрне вараласа тăкасшăн, хăйĕн ылханлă, ĕрешмен картилле свастикине Хĕрлĕ Кремлĕн стенисем çине çакса хурасшăн.

Эсир—пирĕн çывăх та тăван москвичсем, хальхи вăхăтра алсене пăшал тытса тискер варварсене хирĕç çапăçатăр. Тăшман çине тарăхса хаярланни сире геройла ĕçсем тума хавхалантарать. Эсир тăшман хĕссе пынине çавтери вăйлăн тата хăюллăн тăрса сирсе пыратăр, пирĕн тăван столица патне пымалли çулсене хурçа пек çирĕп крепость туса хуратăр, тăшман çав крепость патĕнче хăйĕн вил шăтăкне тупĕ. Çак улăпла пысăк кĕрешӳре эсир пĕччен мар. Пирĕн нумай миллионлă пĕтĕм совет халăхĕ—совет çĕршывĕн мухтавлă патриочĕсем сирĕнпе пĕрле.

Эпир, Шупашкар хулинчи ĕççыннисем, çак хăрушă кунсенче эсир çавтери паттăр та хăюллă пулнипе мухтанса савăнатпăр. Сирĕн хăюллă çапăçу пирĕн чĕрери шухăш-кăмăлсене, тăван çĕршыв умĕнче ответлă пулас шухăш-кăмăла, çĕнĕ вăйпа çĕклет.

Чăваш халăхĕн пиншер чи лайăх ывăлĕсем алла пăшал тытса геройла Хĕрлĕ Çар ретĕнче çапăçаççĕ. Пирĕн республикăри вунпаа пин ĕççыннисем çар ĕçне вĕренсе Социализмлă Тăван çĕршывăн мухтавлă защитникĕсен ретне тăма хатĕрленеççĕ.

Чăваш республикинчи ĕççыннисем пурте пĕр ĕмĕтпе—предприятисенче, колхозсенче тата учрежденисенче тӳрĕ кăмăлпа ĕçлесе тăшмана татăклăнах çапса çĕмĕрме хамăран материаллă ресурссене ӳстерсе пырас ĕмĕтпе хавхаланса пурăнаççĕ.

Эпир çакна лайăх ăнланатпăр: эсир, Мускава хӳтлесе, Октябрьти Аслă Революци совет çĕршывĕнчи пĕтĕм халăхсене пăнă тивĕçлĕхсене хӳтлетĕр. Революци чăваш халăхне, патша Российинчи ытти халăхсене çăлнă пекех, чуралăхпа вилĕмрен çăлса хăварчĕ.

Мускавра Ленин пурăннă тата ĕçленĕ, унта мĕнпур ĕççыннисен савăнăçĕшĕн Сталин юлташ пурăнать тата ĕçлет. Мускав пирĕншĕн яланах хĕвел пек çутанса тăнă. Тăшмансем пирĕн хĕвеле хупласа лартасшăн, пирĕн тăван çĕршывăн çапăнса юнлă фашизм ирсĕр пуçне çурса пăрахĕ. Тăван Мускава гитлерла бандитсенчен çăлса хăварма совет халăхĕ хăйĕн пĕтĕм вăйне хурĕ.

— Хаяр тăшман пирĕн тăван çĕршывăн чĕри—Мускав патне хура çĕлен пек шăвăнать,—тет спиртзаводри рабочи Кравчук юлташ. — Тăшманăн çулне тӳлсе лартмалла. Çакна тума пирĕн предприятисенче ĕç дисциплинине татах та çирĕплетмелле, ытларах тата пахарах продукцисем туса кăлармалла.

Хулари предприятисенче пулса иртнĕ пухусенче пуринче те ĕççыннисем пурте пĕр кăмăллă пулса Мускав хулине геройла сыхлакансем патне çыру яма йышăннă.

## *Хаклă москвичсем, сирĕнпе пĕрле пĕтĕм халăх!*

Совет халăхĕсен аслă столици умне пысăк хăрушлăх тухса тăчĕ. Фашистла тискер кайăксем хăйсен юнлă аллисене пирĕн тăван çĕршывăн чĕри—Хĕрлĕ Мускав çинелле чăсаççĕ, вĕсем Кремль çинчи çутă çăлтăрсем вырăнне фашизмăн выçлăхпа чуралăх паллисене çакса хурасшăн.

Мухтавлă москвичсем фашизмăн тискер те хура вăйĕ хĕссе пынине хăюллăн тата паттăррăн чарса тăраççĕ, вĕсем Мускав çывăхĕнче хурçа пек çирĕп крепость туса хураççĕ, фашистсем валли вилĕм шăтăкĕ хатĕрлеççĕ. Çак йывăр тата хăрушă кунсенче совет çĕршывĕнчи мĕнпур халăхсен шухăш-кăмăлĕ Мускава геройла хӳтлекенсемпе пĕрле.

Ĕнер, ĕç хыççăн, Шупашкарти предприятисенче пуринче тенĕ пекех рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен пухăвĕсем пулса иртрĕç. Шупашкар хулинчи ĕççыннисем тăван Мускава геройла хӳтлекенсене пĕтĕм чĕрери ăшă кăмăлпа саламлаççĕ, çавăнпа пĕрлех, вĕсем социализмлă тăван çĕршывăн аслă столицине тискер фашизмран сыхласа хăварма тăван москвичсемпе пĕр рете тăрса çапăçма хатĕрри çинчен шантарса калаççĕ.

Шупашкар хула совечĕн промкомбинатĕнче ĕçлекен рабочи Щербакин юлташ рабочисен пухăвĕнче çапла каларĕ:

— Коммунистсен партийĕ, тăван çĕршыв пире Мускава гитлерла захватчиксенчен сыхласа хăварма чĕнеççĕ. Эпир, промкомбинатри рабочисем, Мускава геройла хӳтлекенсене пулăшма яланах хатĕр. Мухтавлă москвичсем туса хуракан хурçă крепость çине пырса çапăнса юнлă фашизм ирсĕр пуçне çурса пăрахĕ. Тăван Мускава гитлерла бандитсенчен çăлса хăварма совет халăхĕ хăйĕн пĕтĕм вăйне хурĕ.

— Хаяр тăшман пирĕн тăван çĕршывăн чĕри—Мускав патне хура çĕлен пек шăвăнать,—тет спиртзаводри рабочи Кравчук юлташ. — Тăшманăн çулне тӳлсе лартмалла. Çакна тума пирĕн предприятисенче ĕç дисциплинине татах та çирĕплетмелле, ытларах тата пахарах продукцисем туса кăлармалла.

Хулари предприятисенче пулса иртнĕ пухусенче пуринче те ĕççыннисем пурте пĕр кăмăллă пулса Мускав хулине геройла сыхлакансем патне çыру яма йышăннă.

## *Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту*

### Ăмăрту сарăлса пырать

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Ширшов ячĕпе тăракан артель коллективĕ халь оборонăпа çыхăннă заказсене пурнăçлать. Кашни рабочипе работница хăйне панă ĕçе мĕнле те пулсан хăвăртрах тата лайăхрах туса пыма тăрăшать. Вĕсем хутшăнче нормăна икĕ хут иртерсе тултаракансем те сахал мар.

Белошвейнăй тата тумтирсем çĕлекен цехсем юлашки вăхăтра кулленхи плана 120 процентран кая мар тултарса пыраççĕ. Паллă стахановкăсем М. Соловьева, Е. Клячкина, Ратникова, Пичугина тата Вахлачева юлташсем кашниех иккĕр норма тултараççĕ.

Пичугинăпа М. Гущина комсомолкăсем юлашки вăхăтра спецзаказ тунă çĕрте ĕçлеççĕ. Хастарлă комсомолкăсем кунне 11 сехет е кирлĕ пулсан ытларах та ĕçлеççĕ.

— Эпир Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, кăçалхи çулăн планне декабрĕн 24-мĕшне, октябрь уйăхĕн программине 5 кун малтан тултарма, продукцие çирĕп график тăрăх тата лайăх пахалăхлă туса кăларма, ĕç тухăçлăхне 10 процентран кая мар хăпартма, продукцин хăйне лараканнисенче 5 процент чакарма обязательство илтĕмĕр. Эпир ăна ытлашшипех тултаратпăр,—терĕ артель председателĕ коммунист Е. Демидов юлташ.

### Артель членĕсен обязательстви

ÇĔРПУ. Абакассинчи Громов ячĕпе тăракан кустпромартель Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли хĕлле тăхăнма ăшă кĕрĕксем çĕлеме районри комиссин складне пухăннă чĕрĕ тирсене тăвать. Артель малтанлăха çĕр тир туса кăлартĕ. Тунă тирсен пахалăхĕ лайăх.

Тир тăвакан мастерсем—Л. Никитин, А. Никифоров, М. Никифоров тата Г. Иванов юлташсем пин тир тума пулчĕç. Халĕ Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса пин тире ноябрĕн 7-мĕш тĕлне пысăк пахалăхпа туса пĕтерме хăйсем çине обязательство илчĕç. Ку вăл кашни рабочи пуçне сменăра 5—7 тир вырăнне 10—12 тир тивет.

Артель членĕсем пĕр-пĕринпе социализмлă ăмăрту договорĕ туса хăйсем çине илнĕ обязательстваçене вăхăтра пурнăçлассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Тирсене йĕпетсе туртнă çĕрте кулленхи ĕç нормисене 150—200 процент таран тултарса пыраççĕ.

## Кашни килограмм тĕштырă—çĕршыв оборонин тĕрекĕ

Ишлей районĕнче чылай колхозсем государство умĕнчи обязательстваçене срокчен пурнăçласа пыраççĕ. «Ырашпулăх», Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозсем талăкĕпех аван çапассине организацинленĕ. Ялхуçалăх ĕçĕсене вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ туса пыракан колхозсем (Ярабайкасси, Шетмĕпуç, Чурачăк ялсовечĕсенчи колхозсем) государствăна тырпул тăратмалли обязательстваçене пĕтĕмпех тултарчĕç. «Ырăш», «Коммунизм» колхозсем машинно-тракторнăй станци ĕçлесе панăшăн натуроплата тырăнне те парса татрĕç. «Мотор» колхоз 1941 çулшăн государствăна аш-какай парса татнă тыççăн килес çулшĕн 5 центнер панă. Чăнтăр ялсоветĕнче те çитес çулшăн государствăна аш-какай паракан хуçалăхсем вунпаа шутланаççĕ.

Çав хушăрах хăшпĕр колхозсем хăйсен обязательствисене вăхăтра тулпарас пирки пачах çителĕксĕр кĕрешеççĕ. Акă, Янăш ялсоветĕнчи «Новая сила» колхоз государствăна тырă памалли графике пĕрре те тултарса пымасть.

Çак колхозсен государствăна вăхăтра панă кашни килограмм тĕштырă çĕршыв оборонине тĕреклетме пулăшнине асра тытмалла. **С. ГОРЛАНОВ.**

### Çурхи тырăсене çапса пĕтернĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Яманакри «Красное Сормово» колхозăн 5-мĕш бригади аслă уяв умĕнхи ăмăртăва тухса татăклă обязательствăсем илчĕ. Уявччен кĕрхи пур ĕçсене те вĕçлеме пулнă. Октябрĕн 12-мĕш тĕлне çурхи тырăсене йăлтах çапса пустарнă. Халĕ кĕрхи тырăсене çапаççĕ. Нумай колхозниксем укçа-тенкĕ парăмĕсене тӳлесе татнă.

**М. ГЕРАСИМОВ.**

## Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли пухнă ăшă тумтирсем районри склада пĕр чарăнмасăр килсех тăраççĕ. Кашни колхозникпа колхозница, рабочипе работница тата служащи Хĕрлĕ Çар воинĕсене ăшă тумтирсем парса пулăшма тăрăшать.

Мехкомбинатăн Çĕмĕрлери хатĕрлев конторинче ĕçлекенсен пысăк мар коллективĕ Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 3 мăшăр çăматă, 6 кĕрĕк, пиншак, 4 çĕлĕк, 3 мăшăр çăм алшăш, шарфсемпе чăлхасем тата тирсем пухса панă. Контора директорĕ Сокол юлташ боецсем валли пĕр кĕрĕк, пиншак, пĕр мăшăр çăматă, çĕлĕк, çăм алшăш панĕ. Бухгалтер Иванов юлташ та пĕр пиншак, тепĕр мăшăр çăматă, çĕлĕк тата алшăш, десятник Вдовенко — пиншак, çăматă, çĕлĕк, носки, алшăш тата тепĕр тир панĕç.

Магарино ялсоветĕнчи ĕççыннисем нумаях та пулмасть Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем тума 54 килограмм çăм, 63 тир т. ыт. ямаласем пухса районри склада панĕç.

# Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

☆ ★ ☆

## Мускав патне пымалли çулсем çинчи хаяр çапăçусем

ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ, октябрĕн 22-мĕш. (ТАСС). Ĕнерхи кун пирĕн çар часĕсем противника хирĕç вăйлă çапăçусем туса пынă, противникăн танкĕсемпе пехоти наступленийĕ туса килнине часа тăнă. Нимĕçсем хăйсен вăйĕсене Можайск енче тата Мускав патнелле пыракан шоссе çулĕсенчен кăнтăр енче пухса пыраççĕ. Тăшман пирĕн оборона рубежĕсем урлă шăтарса кĕме тăрăшать. Рокоссовский командирăн боецĕсем хăйсен позицийĕсене малтанхи пекех çирĕп тытса тăраççĕ. Вĕсене хирĕç противник танксем, пехота, утлă çар тата моторизованнăй часĕсем пухăнса тăнă вырăнсем çине персе тăрать. Артиллеринчен персе хатĕрленнĕ хыççăн пирĕн пехотăн Н-ски часĕ, тăшман хирĕç тăнине урăх тĕл пулмасăр, К. ялне пырса кĕнĕ. Çав ялăн урамĕсем пирĕн орудисем тĕл пенипе пĕтнĕ фашистсен виллисемпе витĕнĕ.

Можайск енчен çурçĕререх выртакан участокра Говоров командирăн боецĕсем хăйсем йышăнăлă рубежсенче çирĕпленсе ларнă, вĕсем тăшман танкĕсен атакине сире-сире ярса пыраççĕ. Можайскран килекен шоссе тăрăх хĕвелтухăçнелле нимĕçсен 12 танкĕ шăтарса кĕнĕ пулнă. Вĕсенчен саккăрăшне пирĕн противотанковăй артиллери персе ӳкернĕ. Можайск районĕнче танксен колонначĕн татса илнĕ нимĕç пехотине хирĕç çапăçу пулса иртнĕ. Çак участокра кĕрешекен танксен Н-ски часĕ, юлашки 10 кун хушшинче сакăр çапăçăва хутшăнса, нимĕçсен 19 танкине, противотанковăй 23 орудине, 12 минометне, икĕ броневикне тата ытти техникине пĕтерсе тăкнă.

Ĕнерхи иртен пуçласа противник Н. хули еннелле наступлени тума пуçланă. Тăшман атакисене хирĕç тăрса, пирĕн чассем хĕвелтухăçнелле чакнă. Мало-Ярославец енчен шоссе тăрăх наступлени туса килекен противник питех те пысăк çухатусем тӳсет.

Çанталăк качăрринче пăхмасăрах совет летчикĕсем ĕнер разведка тăвассине, тăшман çине бомбăсем пăрахассине штурмлассине вăйлатнă. Паян йывăр пĕлĕтсем ерипен сирĕлсе пынă. Авиаци икĕ енчен те питĕ активлăн ĕçленĕ. Мускавран фронт еннелле каякан çулсем çине нимĕçсем бомбăсем пăрахма, пулеметсемпе тупăсенчен пеме тăрăшнă. Пирĕн летчиксем тата зенитнăй артиллери тăшман çавăн пек хăтланнине сире-сире янă, нимĕçсен 14 бомбардировщикне персе антарнă. Паян кăнтăрлапа Можайск районĕнчи икĕ пысăк магистраль каçнă вырăнта хĕрӳллĕ çапăçу пуçланса кайнă. Нимĕçсем, танксемпе атака тума хатĕрленсенех, çав магистральсем каçнă тĕле минометсенчен вăйлăн персе тăнă. Противникăн автоматчикĕсем пирĕн пехота йышăнса тăракан вырăн урлă сăрхăнса кĕме тытăннă. Синюшко юлташăн тата Совет Союз Геройĕн Мисусский юлташăн артиллери подразделенийĕсем персе тăрса, пирĕн пехотăна пулăпса пынă, противникăн огневой точкисене путарса лартнă. Пирĕн боецсем рубежа çирĕплĕн тытса тăраççĕ.

## Сталино хули районĕнче лару-тăру çивĕчленсе çитнĕ

КАНТАР ФРОНЧĔ, октябрĕн 22-мĕш. Донбасс йывăр испытанисем умĕнче тăрать. Кĕрешӳ кунран кун хаярланса пырать. Урса кайнă тăшман Донбасса тытса илесшĕн мĕнпур вăйне хурать. Çапăçусем Сталино хулин районĕнче пыраççĕ. Фашистсем тем чухлĕ çухату тӳснипе пăхмасăрах, хĕвелтухăçнелле каласшăн хăтланаççĕ. Хĕрлĕ Çар часĕсем тăшмана пит вăйлăн часа пыраççĕ. Халăх пурăнакан пĕр пункта та юлă çапăçусăр тăшмана паман. Ĕнер Колосов юлташ часĕ тăшманăн пур атакисене те ăнăçлă сирсе янă, тăшманăн наступленийĕ тăвакан часĕсене часа лартнă. Тăшмана хирĕç Провалов юлташăн дивизийĕ геройла çапăçать. Противникăн вăйĕсем пирĕннинчен йышлă пулин те, дивизи мĕнпур атакăсене сирсе ярса, фашистсене пысăк çухатусем кӳнĕ.

Халăх пурнакан пункт сенчен пĕринче Королев майор командир пулса ертсе пыракан часри пĕр рота фашистсене 70 сыпăка сити пĕтерсе тăкрĕ, ытăра пĕр çухату та пулман. Королев майор часĕ пырса çаннине нимĕçсем 1500 сын таран çухатнă.

Итальянецсен утлă çарĕ пĕр эскадрона пĕтĕмĕшпех çухатрĕ. Тăшманăн бронемашинисемпе автомашинисене 20-рен кая мар пĕтернĕ. Çавсем пурте— куçпа курса тăнă çухатусем. Пирĕн инçете перекен йывăр артиллери вучĕпе мĕн чухлĕ фашист пĕтнине шута илме йывăр.

Хĕрлĕ Çаран чаплă воинĕсемпе горняксем пирĕн тăван Донбасса хăюллăн та паттăрлăн хӳтлесе тăраççĕ. Анчах фашистсен вăйĕсем кунта пирĕннинчен нумай ытларах. Апла шулин те, пирĕн вĕсене хирĕç тăрасси çирĕплонсех пырать. Хамăр вăйхала татах та ытларах кăлармалла, татах та çине тăрарах, хаяртарах çапăçмалла. Тăшмана тепле пулсан та чармаллипех чарса лартмалла.

Нимĕçсем Таганрог хулине тытса илчĕç, хĕвелтухăç еннелле тăвакан атакăсене вăйлатрĕç, анчах пирĕн чассем вĕсене тивĕçлĕ отпор панă. Çапăçусем кунĕпех пычĕç, çĕнтерӳ пĕрре пĕрисен енче, тепре теприсен енче пулса пычĕ, каç пулса тĕттăмланнă çитсен кăна неприятель пĕр тĕлте кăшт малалла каймă пултарчĕ. (ТАСС).

## Хăюллă паттăрсен ушкăнĕ

Ку вăл çапăçу хĕрсе кайнă самантра пулса иртнĕ. Красноармеецсен, командирсен, политработниксен ушкăнĕ Е. районне обстановка мĕнлине сăнаса пĕлес тесе кайнă. Кунта нимĕçсем пысăк вăйсем илсе çитнĕ те минометсенчен вăйлăн персе тăма тытăннă. Халь çеç çитнĕ ушкăн патне кунти командир пынă та каланă: нимĕçсем хĕсеççĕ, пирĕн оборона линине татса кĕме хăтланаççĕ, командăй пункта хупăрласа илме пăхаççĕ, тенĕ. Ушкăна илсе пынă полковой комиссар Мартынов юлташ çак çапăçăва йышăнма килĕшет, пирĕн чассене кунтан куçса çĕнĕ рубеж йышăнмашкăн май туса пама тата командăй пункта нимĕçсен вучĕ айĕнчен чиперрĕн майлантарса хăларма решени йышăнать. Хăюллăн ыткăнса, çак ушкăн çул урлă каçса хаять, вăрман хĕрринче позици йышăнать, çакăнтан вара хĕссе хăлекен фашистсен колонниисем çине винтовкăсемпе автоматсенчен пеме пуçлать. Капитан Ильин çак ушкăн командирĕ пулса ăна ертсе пырать. Ăна батальоннăй комиссар Ярцев, капитан Гольберг тата сержант Ждалов активлăн пулăшса пыраççĕ. Хăюллă паттăрсен ушкăнĕ пилĕк сехет хушши фашистсен часĕсем кĕрсе пырассине чарса тăнă. Пирĕн подразделени ку вырăнтан йĕркеллĕн, организованно куçать те çĕнĕ рубеж йышăнать.

Çапăçу вăхăтĕнче сержант Ждалова пуçĕнчен аманнă. Юлташсем ун суранне сыхнă, вăл вара ним чăрăнмасăр тăшман çине вут тăкнă. Сулахай флангра полковой комиссар Мартынов пĕччех тăрса юлнине, ун патне фашистсем ытăннине курать Ждалов сержант. Вăл хăй тăрăх юн юхнине пăхмасăр фашистсен вучĕ витĕр комиссар окопĕ патне васкать. Шăвать, юлашки вăй-халне пуçтарса комиссар патне çитет, çав самантрах ун аллинчи автомат комиссар вутне ӳстерсе ярать. Красноармеец Лычкин ним хăрамасăр çапăçнă. Çапăçу вăхăтĕнче вăл хăйсенчен йĕри-тавра мĕн пулса пынине, пирĕн войскăсем мĕнле вырнаçса тăнине пĕлсе тавăрăннă, Е. районĕнчен çĕнĕ рубежа куçакан пирĕн часпа сыхăну тытса тăнă. Командирсемпе комиссарсен ушкăнĕ патне тавăрăнса çитсенех, вăл винтовка тытса фашистсене çулса тăхнă. Батальоннăй комиссар Ярцев паттăрлăх примерĕ кăтартнă. Патрон дискисенче пĕрин хыççăн теприне улăштарса тăрса, вăл хăйĕн вучĕпе нимĕç салтакĕсен речĕсене пĕрин хыççăн тепĕр не пĕтерсе тăнă. Хăш флангра та пулин йывăр килсенех, Ярцев унта шуса çитсе аллинчи автомат вучĕпе унти вута вăйлатса пынă. Çапăçура фашистсен пульли хăюллă комиссара амантнă, анчах Ярцев стройран тухман, хăйсен паттăрсен ушкăнĕпе пĕрле хăйсен позицине тытса тăнă. Кайран, хамăр войскăсем патне куçнă чух, çак ушкăна нимĕç автоматчикĕсем хупăрласа илнĕ. Полковой комиссар Мартынов, батальоннăй комиссар Ярцев, капитан Ильин, сержант Ждалов, красноармеец Родионов автоматчикĕсене сывăхран персе вĕлерсе тăкнă та хупăрласа илнĕ çĕртен татса тухса хăйсен часне çитнĕ. Хăюллă, вăрçă ĕçне лайăх пĕлекен боецсемпĕн хупăрласа илни хăрушă маррине вĕсем тата тепĕр хут кăтартса панă. Боецсен, командирсен тата комиссарсен пĕчĕк çеç ушкăнĕн позицийĕ чĕтĕм фронта палла пулса тăнă. Пирĕн сынсем çапăçăва çĕнĕ хаваслăхпа кĕрсе кайнă, совет çĕршывĕн кашни пусăмăнех геройла хӳтлесе çĕнтерӳллĕ кĕрешсе тăнă. (ТАСС).

### Фашистсене сывлăшран пырса çапни

ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ, октябрĕн 22-мĕш. (ТАСС). Паян пирĕн авиаци тăшман танкĕсене тата моторизованнăй пехотине хирĕç активлăн çапăçрĕ. Октябрĕн 22-мĕшĕнче Можайскпа Мало-Ярославец енче 100 танк таран тата пехотăпа боеприпассем тиенĕ 250 автомашинăна пĕтерсе тăкнă. Противникăн аэродромĕсем çинче 10 самолета çуратарса янă.

# Рокоссовский юлташ часĕсен çирĕплĕхĕ

☆

Пилĕк кун хаярах нимĕçсен çарĕсем В. хулин районĕнче наступлени пуçласа ячĕç. Вĕсем мала танксемпе пехотăна кăларса тăратрĕç. Пирĕн чассем танксене ирттерсе ячĕç, вĕсене хыçран пыракан пехотăран татса илчĕç те пехотине çапăçма тытăнчĕç. Пехотăн наступленине чарса лартрĕç. Шоссе çине тухма пуçланă танксене пирĕн артиллери çĕмĕрме пуçларĕ. Темиçе машина çухатсан, фашистсен колонни хаяллă çаврăнса кайрĕ. Тепĕр кун иртсен атака каллех пуçланчĕ. Танксемпе пехота О. ялне çĕмĕрсе кĕчĕç, анчах унтан малалла кайма вăй çитеймерĕç. Ялтан тухнă çĕрте вĕсене Н-ски часть боецĕсем кĕтсе илчĕç. Кунта кунĕн-çĕрĕн вăйлă çапăçусем пычĕç. Пирĕн подразделенисем рубежа çирĕп тытса тăчĕç, вĕсем танксем умĕнче те, минометсемпе артиллери вучĕ умĕнче те пĕр пусăм каялла чакмарĕç. Çак кунсем хушшинче Рокоссовский юлташ часĕсем çирĕп стена туса лартрĕç, çак стена нимĕç танкĕсен çулне картласа тăрать. Фашистсен машинисем курăнсанах пирĕн артиллери тăвăллăн пеме пуçлать. Тăшман атакисене пурне те сирсе ярраççĕ.

Октябрĕн 21-мĕшĕнче ирхине нимĕçсем каллех шоссе çине тапăнса кĕме хăтланчĕç, анчах пирĕн боецсем оборона линине халиччен тĕнче курман çирĕплĕхпе тытса тăчĕç. Танксемпе кĕрешме пĕр паттăрлăх кăна çитмест, тавçăрулăх, опыт, тĕрĕс решени йышăнни кирлĕ. Рокоссовский командир боецĕсен, юлашки уйăхсем хушшинче Хăваланăçĕнчи фронтра çапăçусенче пиçĕхнĕскерсен, çав опытпа тавçăрулăх пур, паттăрлăх та çителĕклĕ. О. ялĕ сывăхĕнчи çапăçура пĕр кун хушшинче кăна нимĕçсенне 17 танк, 3 оруди çунтарса ячĕç. Анчах тăшман малаллах хирĕнет, кунти лару-тăру малтанхи пекех çивĕччĕн тăрать. Нимĕçсем кунта пысăк вăйсем пухнă. Танксен пĕр дивизийĕ кунта тӳрех Рославльтен килнĕ.

Çĕрле пирĕн инçе перекен йывăр артиллери нимĕç çарĕсем пухăннă пунктсем çине персе тăчĕ. Разведка пĕлтернĕ тăрăх, йывăр артиллери пенинчен фашистсене сахал мар снеп пулнă. Лару-тăру Н-ски часть йышăнса тăракан участокра пăртак йывăрланчĕ. Кунта нимĕçсем тылран кĕчĕç. Анчах та пирĕн часăн боецĕсем çухалса каймарĕç, ним чухлĕ те чакмарĕç, вĕсем хăйсен рубежне тытса тăраççĕ.

Пĕтĕм фронт тăршшĕпех укрепленисем тунине, артиллери тăшмана каялла сирсе ывăтма хатĕрленсе тăнине куртăмăр эпир. Çынсем оборонăна хатĕрленеççĕ, тăшманăн наступленине хаяррăн сирсе яма хатĕрленеççĕ.

Рокоссовский командирăн часĕсем противник хĕснине парăнмасăр чарса тăраççĕ. Гитлер войскисене вăйлă çапса сисĕнмелле çухатусемех кӳреççĕ. Темиçе кун ĕнтĕ умлă-хыçлах фашистсем питĕ кирлĕ икĕ пункта тытса ялесшĕн хăтланаççĕ, анчах вĕсене кашнинчех пысăк çухатусем кӳрсе малтанхи позици çинех ывăтса яраççĕ. Паян ирех нимĕç танкĕсен 6-мĕш полкĕ Н. районĕнче çĕнĕ наступлени тума тытăнчĕ. Танксен пĕр батальонĕ, пĕр рота ытларах пехота, артиллерипе, минометсемпе пĕрле, пирĕн войскăсем тăнă вырăна савăлланса кĕчĕ, наступление малалла тума хатĕрленет. Капров юлташ боецĕсем, тăшман танкĕсене сывăха ярса, вĕсем çине артиллерипе пулеметсенчен пеме тытăнчĕç. Контратака туса боецсем тăшманăнне темиçе танк, 4 оруди, салтаксемпе офицерĕсене 80 сынна çити пĕтерсе тăкрĕç. Капров юлташ командир пулса ертсе пыракан часть 3 кун хушшинче тăшманăнне 25 танк, икĕ батарея, пĕр батальон пехота пĕтерсе тăкрĕ. Çак çапăçусенче уйрăмăнах красноармеецсем Кириковпа Обухов юлташсем палăрчĕç. Вĕсем иккĕшĕ те 3-шер танк пĕтерсе тăкрĕç.

Тăшмана Мускав патне пĕр утăм та сывхарма памасть Дуватов юлташăн утлă çар труппи. Хăюллă тапăнусем туса, тĕрлĕ те, гранатăпа та çĕмĕрсе, çиçĕм пек хăварт сӳрекен кавалеристсем Гитлер бандисене малалла кĕме памаççĕ.

Рокоссовский командирăн участокĕнче кунĕн-çĕрĕн пĕр чарăнми вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Боецсем, командирсем, политработниксем тăшман атакисене икĕлми çирĕплĕхпе паттăрлăн сирсе тăраççĕ. Халиччен тĕнче курман чăтăмлăх палăрать вĕсен ĕçĕсенче.

Мускав патне пымалли инçетри çулсем çинче лару-тăру халь те çивĕч-ха. (ТАСС).

## Оборона фондне

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Именкассинчи вăтам шкулăн директорĕ орденоносец Иванов юлташ çĕршыв оборонин фондне 1020 тенкĕлĕх, унăн арăмĕ учительница Ю. Иванова юлташ 1000 тенкĕлĕх облигацисем хывнă.

Паянхи кун тĕлне районри ĕçсыннисем оборона фончĕ валли 42 пин тенкĕлĕх заем облигацийĕсем перекет кассисене пырса панă.

С. ВАНИН.

# Тракторсене пысăк пахалăхпа тата вăхăтра юсас пулать

Тракторсемпе ĕçлемелли сезон вĕçленсе пырать. Халĕ пур машинно-тракторнăй мастерскойсемпе машинно-тракторнăй станцисенче те тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсама тытăнмалла. Тракторсене вăхăтра тата пысăк пахалăхпа юсассине—мастерскойсене, инструментсемпе станоксене, рабочисен ĕç вырăнне вăхăтра хатĕрлени татса памалла. Çак ĕçе, уй ĕçĕсем пĕтессине кĕтмесĕрех, хатĕрленсе çитсе, тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсама организованно тытăнмалла.

Чылай машинно-тракторнăй станцисем тракторсене кĕркуннехипе хĕллехи вăхăтра юсама ăнăçлăн хатĕрленчĕç. Вăрнарти МТС (директорĕ Осипов, старший механикĕ Ремезов), Йĕпреçри МТС (директорĕ Свешников юлташ) тракторсене юсама вăхăтра хатĕрленнĕ. Елчĕкри МТС (директорĕ Яшин юлташ) сентябрьпе октябрь уйăхĕсенче 13 трактор, Чкаловски МТС (директорĕ Архипов, старший механикĕ Северов) 3 трактор, Йĕпреçпе Вăрнар МТ Станцийĕсем 4-шар трактор юсаса кăларчĕç.

Вăрçă вăхăтĕнчи лару-тăру тракторсене юсанă çĕрте машинно-тракторнăй станцисен шалти резервисемпе анлăрах усă курма ыйтать. Малта пыракан МТС работникĕсем çакна пурнăçлама пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ. Улатăр, Элĕк, Шăхасан машинно-тракторнăй станцийĕсен склачĕсенче хăйсен мастерскойĕсене, туса хатĕрленĕ детальсем темĕн чухлех выртаççĕ. Иртнĕ çулта Шупашкарпа Йĕпреç МТ Станцийĕсем юрăхсăр блоксене вырăнтах юсаса майлаштарнă. Калас пулать, çак тракторсем ытти тракторсенчен пĕрре те япăх мар ĕçленĕ. Пирĕн мастерскойсенче тракторсен пур пайĕсене те пекех туса хатĕрлеме май пур. Ку тĕлĕшпе МТС директорĕсемпе механиксем пĕлсе ĕçлени çеç кирлĕ. Вĕсен халех хăйсен склачĕсенче мĕнле детальсем пурринне шута илмелле. Усă курма май пур детальсемпе пурнинпе те анлăн усă курас пулать. Кивĕ пайсене çĕнисемпе улăштарса лартассине кирлĕ чухне çеç тума юрать.

МТС директорĕсем тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсакан кадрсем вĕрентсе хатĕрлессинчĕн большевикла тăрăшмалла. Чкаловски, Вăрнар, Шăхасан, Улатăр районĕсенчи МТ Станцийĕсем хăйсене валли кирлĕ таранах кадрсем вĕрентсе хатĕрлерĕç. Анчах хăшпĕр МТ Станцисенче халь кадрсем çителĕклĕ мар-ха. Кун пек МТ Станцисенче кĕске сроклă курссем витĕр тата пĕччăнпăр вĕрентсе кадрсем хатĕрлес пулать. Вăрçă вăхăтĕнчи условире мастерскойсенче ĕçлекенсем хушшинче темиçе профессипе ĕçлессине анлăн сарса пырас пулать.

Уйăхăр ĕçĕсем тума уйăрнă трактор бригадинчи трактористсем хăйсен тракторĕсене халиччен хăйсемех юсанă. Çапла туни вăл хăйĕн результатне пачĕ. Апла пулин те, çак методпа пур чухне те усă курма май килмест. Мĕншĕн тесен трактористсен составĕнче халь пысăк опытлă çынсем сахалтарах. Хăшпĕр бригадăсенче пĕрле ĕçлемелле. Çавăнпа та МТС директорĕсем халех 1942 çулта ĕçлеме кашни трактор çумне 2 тракториста çирĕплетмелле.

Тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсанă чухне çунтармалли япаласене, метала, запаслă пайсене тата ытти материалсене май килнĕ таранах перекетлемелле. Кашни килограмм металл тата кашни болт, гайка, деталь шутра пулмалла. Машинно-тракторнăй станцисенчи работниксем тракторсене пысăк пахалăхпа тата йӳнĕ хакпа юсаса кăларассишĕн кĕрешмелле.

Çак пысăк задачăна пурнăçа кĕртни ситес çуракинне ăнăçлăн туса хăварма май туса парать.

И. ШОРНИКОВ.

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн заместителĕ.

## Хамăр сăмаха тӳрре кăларатпăрах

КУКЕÇ. Август уйăхĕнче поселокри комсомолкăсемпе çамрăк хĕрачасем пустарăнса фронтри боецсем патне пырне—тĕрленĕ алшăллисем, носкисем, портянкăсем, ĕнчĕксем, супăнь, одеколон тата ытти çавăн пек япаласем ярса патăмăр.

Боецсем пирĕн посылкăна илнĕ. Ответлă çырура вĕсем акă мĕн çыраççĕ:

«Шупашкар районĕнчи комсомолецсемпе комсомолкăсене.

Хаклă юлташсем!

Эпир сирĕн парнесене илтĕмĕр. Икĕ хут орденлă тата хĕрлĕ ялавлă Н-ски стрелковăй дивизири боецсен, командирсемпе политработниксен ячĕпе эпир, комсомолецсем, пирĕншĕн чăрманнăшăн сире чĕререн тав тăватпăр.

Сирĕн парнӳсене пирĕн часри чи лайăх сынсене—отечественнăй вăрçăн геройĕсене панă. Парнене сирĕн земляк—пулеметчик Иванов илчĕ. Эсир хăвăрăн замлякупа мухтанма та пултаратăр—вăл чăн-чăн герой. Хăйĕн пулеметчĕпе вăл çĕр фашиста ытла пĕтерсе тăкрĕ. Парнене çавăн пекех хăюллă командир-артиллерист Игорь Боздвиженский илчĕ. Хăюлăхшăн, хастарлăхшăн пирĕн боецсем ăна «артиллерийский Чапаев» тесе чĕнеççĕ.

Шансах тăрăр, юлташсем, фронтра пирĕн çине хуня задачăсене эпир ăнăçлăн пурнăçлатпăр. Ун çинчен пирĕн боецсен, командирсен, политработниксен паттăрлăхĕ кăтартса парать.

Н. ялĕ патĕнчи çапăçура тăшманăн темиçе огневой точки пирĕн пехота наступленине каймалли çула хупăрласа лартрĕç. Вара кĕçĕн лейтенант Доманов юлташ хăйĕн туппине мала кустарса кăларчĕ те, тӳррех тăшман çине тĕллесе пеме пуçларĕ. Темиçе пенипех Доманов юлташ тăшманăн икĕ туппине тата пулеметсен икĕ расчетне çĕмĕрсе тăкрĕ. Пехота валли çул уçалчĕ. Штыкпа тата гранатăпа пирĕн хăюллă пехотинецсем çапăçăва вĕçлерĕç. Вĕсем, фашистла ирсĕрсене пĕтерсе тăкса, Н. ялне йышăнчĕç.

Пĕр çапăçура нимĕçсем аманнă красноармееца тытăна илме хăтланчĕç. Красноармеец комсомолец Рудный хăйĕн юлташне çăлма сиксе ӳкрĕ. Йышлă бандитсем хирĕç пĕччăнех паттăрăн çапăçса, вĕсене çĕнтерчĕ. Гитлерла темиçе молодчика пĕтерсе тăкса, вăл юлташне çăлчĕ.

Пирĕн часре нумай вĕсем, отечественнăй вăрçăн геройĕсем. Вĕсем хăйсен пурнăçне хĕрхенмесĕр, вилĕмрен хăрамасăр, пирĕн дивизин боевой ялавĕн чысĕшĕн çапăçаççĕ, фашистла ирсĕрсене ним хĕрхенмесĕр пĕтереççĕ.

Эпир, Н-ски дивизири комсомолецсем, сире те, юлташсем, пирĕн геройсем фронтра çапăçнă пекех, тылра тăрăшса ĕçлеме чĕнетпĕр. Кашни хăйĕн вырăнĕнче большевикла ĕçлĕр, вăрçă ĕçне вĕренĕр, пирĕн халăхăн тăшманне—Германи фашизмне хирĕç кĕрешекен боецсен малти ретне тăма хатĕр пулăр.

Астăвăр, юлташсем! Пирĕн ĕç—тĕрĕс ĕç, апла пулсан, çĕнтерӳ пирĕнтех пулать.

Тăшмана çапса çĕмĕрĕпĕр. Çĕнтерӳ пирĕнте пулĕ!

Комсомолецсем хушшинпе алă пусатпăр:

**А. Горяйнов, А. Соболь, В. Бартев, В. Хаустов, К. Чекулаев, Г. Васильева, М. Авраменко.**

1941 çулхи сентябрĕн 29-мĕш.

Ответ кĕтетпĕр».

Комсомолкăсемпе çамрăк хĕрачасем хăйсен пĕчĕк парни боецсем патне çитнĕшĕн хавас. Çырăва илсе вуланă хыççăн, райцентрти хĕрачасем кашнех пĕрер мăшăр носки, алшăп е чăлха çыхса хатĕрлесе, çак кунсенче ответлă çыру яма пулчĕç. Халĕ хĕрачасем боецсем валли ăшă пăпаласем хатĕрлес тĕлĕшпе хĕрсех ĕçлеççĕ. Хамăр сăмаха тӳрре кăларатпăрах.

А. ОХАНДЕРОВА.
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

## Вĕренекенсен пархатарлă ĕçĕсем

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Пирĕн Совет Союзĕнчи вĕренекен чылай ачасен ашшĕсем, пиччĕшĕсем Хĕрлĕ Çарта çынçисен фашистла Гитлер çарне хирĕç паттăрăн кĕрешеççĕ. Аппăсем е пиччĕшĕсем ачасене шкулта отлично вĕренме хушса хăварнă. Халĕ вĕсем çав хушусене чыслăн пурнăçласа пыраççĕ. Акă, Çĕнĕ Мăратри туллимар вăтам шкулта вĕренекен хĕрача А. Казакова çĕнĕ вĕренӳ çулне кĕнĕренне пĕр кун сиктермесĕр шкула çӳрет, уроксене отлично вĕренет, вĕренӳре кайра пыракан ачасене пулăпать.

Вĕренекен ачасем Хĕрлĕ Çара мĕн вăй çитнĕ таран пулăшаççĕ. Асанкассинчи туллимар вăтам шкулта вĕренекен ачасем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем тума 6 килограмм çăм, 161 тенкĕ укçа, 4 тир пухнă.

Вĕренекенсем хушшинче тимуровецсен йышĕ ӳссех пырать. Вĕсем Хĕрлĕ Çарта тăшмансене хирĕç çапăçакан красноармеецсен тата мобилизацилленнисен çемьисене пулăшаççĕ. Акă, Кивĕ Сĕнтĕрти туллимар вăтам шкулта вĕренекен ачасем П. Мельдина О. Кокшина арăмĕсене сĕрулми кăларса панĕç. Хирти Выçлири «Красный Восток» колхозра В. Желудкин письмоносец обязательнăй йĕркепе çар ĕçне вĕренет. Ун вырăнне шăлнĕ Хирти Явăшри вăтам шкулта 6-мĕш класра вĕренекен ача Алексей Желудкин письмоносец пулса ĕçлет.

Ачасем çар ĕçне тăрăшса вĕренеççĕ. Çĕнĕ Киперĕри вăтам шкулта вĕренекен ачасем çар ĕçне вĕренекен ПВХО, ГСО, физкультура, Ворошиловла тĕл перекенсен кружокне организациренĕ. Занятисем расписани тăрăх йĕркеллĕ пулса пыраççĕ. Кĕçĕн Кăçалти пуçламăш шкулти IV-мĕш класс учительницин Ласточкина юлташ 38 ачана ПВХО нормине пама вĕрентет.

В. ВИКТОРОВ.

# Германи хаçачĕсем ирĕксĕрех йышăнни

СТАМБУЛ, октябрĕн 22-мĕш. (ТАСС). Тем чухлĕ мухтанчăклă заявленисем тунă хыççăн, нимĕçсен хаçачĕсем каллех Хĕвелтухăç фронтĕнчи каламасăк пысăк йывăрлăхсем çинчен ӳпкелешме тытăнчĕç. «Берлинер Локаль Анцейгер» ятлă хаçат çапла çырать: Хĕвелтухăçĕнче çак кунсенче пыракан çапăçусем е çĕнтерӳпе вĕçленĕç, е Германие хăйне çĕнтерсе тăкнипе пĕтĕç. «Дейтше Цейтунг Аахен» ятлă хаçатăн военнăй корреспонденчĕ, совет войскисем вăйлăн хирĕç тăнине палла туса, çапла калать: «Совет салтакне эпир ку таранччен те пĕлсе çитеймеспĕр. Совет салтакĕ вăйлăн та тимлĕн хӳтĕленет. Тепле хăтлансан та, ним тума та çук пек туйăннă вăхăтра, вăл çапах атакăна кĕрсе каять». Пĕр нимĕç генералĕ, Ленинград патĕнчи çапăçусем çинчен çырнă май, çапла калать: Ленинград патĕнче нимĕçсем ним те тăвайманни икĕ çăлтавран килет: пĕр çăлтавĕ — Ленинград тавра вăйлă çирĕплетнĕ полоса пурри, тепĕр çăлтавĕ — совет çарĕ çапăçас тĕлĕшрен пит пултаруллă пулни. «Çак тĕлĕнтерет, — тесе çырать генерал, — Ленинград тавра çирĕплетсе çавăрнă оборона линине, пĕтĕмĕшпе илсен, вырăнти халăх вăйĕпе тунă. Çакна калас пулать: Ленинград оборонин линийĕ калама çук вăйлăн хирĕç тăрать. Большевикла чассем çине тăрса çапăçаççĕ, парăнни çук».

«Берлинер иллюстрирте Нахтаусгабе» ятлă журнал çакна йышăнать: нимĕçсене вăйлă тăшманпа вăрçма тивĕ, тет.

## Англи авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, октябрĕн 22-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: октябрĕн 21-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Вăтаçĕр тинĕс районĕнче пысăк активлăх кăтартнă. Триполире тĕрлĕрен çар объекчĕсем çине 20 тонна вут хыпăракан тата фугаслă бомбăсем пăрахнă. 3 сехет хушши тапăннă вăхăтра тăможня çурчĕ çине, гидросамолетсем тăракан вырăн çине, складсем тата стратеги тĕлĕшĕнчен кирлĕ тĕрлĕрен пунктсем çине бомбăсем пăрахнă. Унсăр пуçне бомбăсем пĕр грузовой пароход çине тĕлеç пырса ӳкнĕ. Пароходăн водоизмещенийĕ 3.000 тонна. Бомбăсем пăрахнипе складсенче тата портри ытти сурт-текенче вăйлă пушăрсем тухнă, вĕсем 150 миллиграмах курăнса тăнă.

## Англие поляк волонтерĕсен пысăк отрячĕ çитнĕ

ЛОНДОН, октябрĕн 22-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи порчĕсенчен пĕрне Канадăран тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчен поляк волонтерĕсен пысăк отрячĕ çитнĕ. Вĕсем Польшăн сывлăш-çар вăйĕсене вăйлатма пынă. Волонтерсем Англи авиацийĕн составĕнче вăрçакан Польша эскадрильисен составĕнче кĕмелле.

## Нейтралитет çинчен калакан закона пăрахăçа кăларасси пирки

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 22-мĕш. (ТАСС). Америкăри хаçатсем Америкăн татах икĕ пароходне путарни çинчен пĕлтернине курăнмалли вырăнта пичетлесе кăларнă. «Нью-Йорк таймс» хаçат çакăн пек шултăра заголовок пичетленнĕ: «Америкăн суту-илӳ тумалли татах икĕ пароходне путарнă. Çакă вăл пиратла ĕç, тесе калать президент».

«Нью-Йорк таймс» хаçатăн Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, пароходсене путарни — нейтралитет пирки калакан закона çĕнĕрен пăхса тухасси çинчен кăлармалли законăн проектне сенат йышăнассине хăвăртлатать. Юнайтед пресс агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, конгресăн хăшпĕр членĕсем ответлă мерăсем йышăнма ыйтнă. Ютçĕршыв ĕçĕсен комиссин председателĕ Конналли çапла каланă: пароходсене путарни Америкăн суту-илӳ тумалли пароходĕсене тĕслăлланлатарма кирлине ӳçăн кăлартса парать, тенĕ. Флорида штатĕн сенаторĕ Америкăн путарнă кашни судни вырăнне Америкăн тинĕс-çар флочĕ Германие икĕ пароходне путартăр, тесе ыйтнă. Сенатор-демократ Ларсен (Пенсильвания штатĕ) нейтралитет çинчен калакан закона пĕтĕмĕшпех пăрахăçа кăларма ыйтнă. «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат çапла кăлартса парать: Германи вăрçă зони тесе пĕлтернĕ зона тулашĕнче пароходсем çине торпедăсем ярса тапăлни вăл — нимĕçсем хăйсене килĕшнĕ чухне пур çĕрте те пиратла ĕçсем тунине пĕлтерет. Çакна хирĕç пĕр ответ çеç пулма пултарать: Америка çулĕсене ăсăр анархирен хӳтлемешкĕн флот аллинче мĕнле средствăсем пур, çавсемпе пуринне те усă курса, Америкăн кашни пароходнех кăспăллалантармалла.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—68, сырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 6649.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 490. Ф. 6. 58 х 84 п. л.